26-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1943 МАЙ 26 ЮНКУН 109(6346) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Машинăпа тракторсен паркне пысăк тухăçлăхпа ĕçлеттернĕшĕн, ЧАССР Наркомземĕпе Наркомзем ăн Политсекторĕ тăратнă тăрăх, ялхуçалăхĕнче малта пыракансен республикăри ХИСЕП ХАМИ çине çаксене кĕртнĕ:

83. П. Л. Афанасьева — Куславкка МТС-ĕнчи трактористка. Вăл плана палăртнă 35 гектар вырăнне 76 гектар сухаланă, 36 килограмм горючи перекетлесе хăварнă.

84. М. А. Яковлева — Куславкка МТС-ĕнчи трактористка. Вăл плана палăртнă 35 гектар вырăнне 56 гектар сухаланă, 31 килограмм горючи перекетлесе хăварнă.

85. Куславкка МТС-ĕнчи К. П. Антонов ертсе пыракан тракторнăй бригада. Вăл планпа палăртнă 300 гектар вырăнне 314 гектар сухаланă, 125 килограмм горючи перекетлесе хăварнă.

86. Куславкка МТС-ĕнчи В. Т. Казаков ертсе пыракан тракторнăй бригада. Вăл планпа палăртнă 263 гектар вырăнне 275 гектар сухаланă, 220 килограмм горючи перекетлесе хăварнă.

87. Куславкка МТС-ĕнчи Н. Н. Желтухин ертсе пыракан тракторнăй бригада. Вăл планпа палăртнă 300 гектар вырăнне 302 гектар сухаланă, 86 килограмм горючи перекетлесе хăварнă.

88. Сĕнтĕр МТС-ĕ (директорĕ А. Е. Чупраков, политотдел начальникĕ П. К. Константинов, старши механикĕ Огиков). МТС çураки вăхăтĕнче тракторпа ĕçлемелли плана 101,2 процент тултарнă, 770 килограмм горючи перекетлесе хăварнă.

89. Шăмăршă МТС-ĕнчи В. Т. Фадеев ертсе пыракан тракторнăй бригада. Вăл планпа палăртнă 225 гектар вырăнне 280 гектар сухаланă, 100 килограмм горючи перекетлесе хăварнă.

90. Михаил Розин — Сĕнтĕрвăрри МТС-ĕнчи тракторист. Вăл СХТЗ тракторпа ĕçлесе планпа палăртнă 65 гектар вырăнне 74 гектар сухаланă, 400 килограмм горючи перекетлесе хăварнă.

91. Сĕнтĕр МТС-ĕнчи Н. Ф. Фомин ертсе пыракан тракторнăй бригада. Вăл планпа палăртнă 260 гектар вырăнне 333 гектар сухаланă, 78 килограмм горючи перекетленĕ.

Комбайнсемпе жнейкăсене вăхăтра юсаса хатĕрлес

Республикăри колхозсен уйхирĕсенче çураки ĕçĕсем вĕçленсе пыраççĕ. Йывăрлăхсене большевикла çĕнтерсе, кăçал та колхозлă ял фронт заказĕсене ăнăçлăн пурнăçласа пырать. Пысăк тухăçлă тырпул туса илессишĕн колхозниксем, колхозницăсем тата трактористсемпе трактористкăсем пĕтĕм вăя хурса ĕçлеççĕ. Республика тĕштырăсем тата пăрça йышши культурăсем акмалли плана ăнăçлăн пурнăçларĕ. Майăн 25-мĕшĕ тĕлне 20 районра çуркуннехи уйхир ĕçĕсене пĕтĕмĕшпех вĕçленĕ, 18 МТС çураки вăхăтĕнче тракторпа ĕçлемелли плана ирттерсе тултарчĕç.

Çапла, пирĕн республикăри колхозсем фронтпа çĕршыв умĕнчи хăйсен малтанхи тивĕçне ăнăçлăн пурнăçа кĕртрĕç, çурхи тырăсене нумай колхозсем вăхăтра, пысăк панхалăхпа акса хăварчĕç. Техникăллă культурăсемпе пахча-çимĕçсене те хавăртрах акса пĕтермелле, ялхуçалăхĕнчи ытти черетлĕ ĕçсене тума тытăнмалла.

Колхозсемпе МТС-сем умĕнче пысăк задачăсем тăраççĕ. Çав задачăсене ăнăçлăн пурнăçлама пĕтĕм вăя пухмалла, çураки вăхăтĕнче тунă çитĕнӳсене çирĕплетсе, тата пысăкрах ӳсĕмсемпе ĕçлеме хатĕрленмелле. Сталин юлташăн майăн 1-мĕшĕнчи приказĕ хыççăн анлăн саралнă социализмлă ăмăрту пирĕн колхозсенче малашне çĕнĕрен пысăк çĕнтерӳсем тума пулăшмалла.

Колхозсемпе МТС-сен черетре тăракан тĕп задачисенчен пĕри вăл —тырпула пухса кĕртме хатĕрленесси пулать. Çураки вăхăтĕнче пĕр ĕç — çурхи тырăсене акса хăварасси пулчĕ пулсан, малашне ĕнтĕ колхозниксемпе колхозницăсен пĕр вăхăтрах темиçе пысăк ĕç туса пыма тивет: калчасене çумкуракĕсенчен сыхламалла, ирхи çĕртме тумалла, тислĕк кăлармалла, утă çулмалла. Çак ĕçсене вăхăтра туса пынипе пĕрлех, тырăсене пухса кĕртме те тĕплĕн хатĕрленмелле.

Тырпула пĕр тăкаксăр тата вăхăтра пухса кĕртес ĕçĕн ăнăçлăхĕ пирĕн МТС-семпе колхозсем хăйсен комбайнĕсемпе жнейкисене, косилкисене тата транспорт инвентарьне тĕплĕн юсаса хатĕрленинчен килет. Машинăсемпе туллин усă курни ялхуçалăхĕнче тĕп вырăн йышăнмалла. «Тракторсемпе комбайнсене тата ялхуçалăхĕнчи ытти машинăсене 1943 çулти уйхир ĕçĕсене туса ирттерме хатĕрлесси çинчен» йышăннă хăйсен постановленийĕнче партипе правительство çак ыйтăва тĕп вырăна хураççĕ.

1943 çулта тырпулсене пухса кĕртес ĕçе мĕнпур пек комбайнсене, жнейкăсене, косилкăсене пурне те вăхăтра, лайăх юсаса кăлармалла. ЧАССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕ «Комбайнсене тата тырпул пухса кĕртмелли ялхуçалăхĕнчи ытти машинăсене 1943 çулти тырпула пухса кĕме хатĕрлесси çинчен» постановлени йышăнчĕç. Республикăри МТС-сен кăçал июнĕн 1-мĕшĕччен капитальнăй тата текущи ремонтпа 110 комбайна юсаса кăлармалла, июнĕн 15-мĕшĕ тĕлне 170 комбайн, июлĕн 1-мĕшчен 225 комбайн, июлĕн 15-мĕшчен 280 комбайн юсаса хатĕрлемелле. Çак графике пурнăçлас ĕçе райсовет исполкомĕсен председателĕсемпе ВКП(б) райком секретарĕсен хăйсен ертсе пымалла. Комбайнсене пурне те кăçал августăн 15-мĕшĕ тĕлне юсаса пĕтермелле.

Малта пыракан МТС-сем комбайнсене юсама тытăннă. Шăхасан МТС-ĕ çак ĕçе пысăк ответлăхпа тума тытăнчĕ. МТС-ăн пур бригадисем те комбайнсене юсаççĕ, висĕ комбайн ĕçе тухма хатĕр ĕнтĕ. Комбайнсем çумне зерноуловительсем туса лартнă. Элĕк МТС-ĕ нумаях пулмасть комбайнсен моторĕсене юсаса пĕтерчĕ. Çавăн пекех Комсомольски, Вăрнар, Канаш машинно-тракторнăй станцийĕсенче те комбайнсен моторĕсене юсас ĕç аван пулса пырать, Елчĕк МТС-ĕ 17 комбайнăн моторĕсене юсанă.

Комбайнсене юсас ĕçе халĕ вăйлатмалла, Совнаркомпа ВКП(б) Обкомĕ кăтартса панă графика çирĕппĕн пурнăçласа пымалла.

Кăçал хура тулă, вир, нумай çул ӳсекен кураксен вăрлăхлăх участокĕсене те комбайнсемпе пуçтарса илмелле пулать. Çавăнпа та комбайнсем çак культурăсене вырма та хатĕр пулмалла.

Косилкăсене тырă вырмалла туса майлаштарас пулать. Колхозсен мĕнпур жнейкисемпе косилкисем, çавăн пекех пĕтĕм транспорт инвентарĕ июлĕн 25-мĕшĕ тĕлне ĕçе хатĕр пулмалла, çак тĕле вĕсене пурне те юсаса лартмалла. Кашни колхозăн çителĕклĕ таран кĕреплеллĕ çавасем тумалла, çурласемпе çавасене шăллаттарса, туптаса хумалла. Çак ĕçе кашни колхозăн июлĕн 15-мĕшĕ тĕлне туса пĕтермелле.

Иртнĕ ялхуçалăх çулĕнче хăшпĕр МТС-сем (Сĕнтĕрвăрри, Çĕрпӳ, Чкаловски, Улатăр) комбайнсене юсас ĕçе çиелтен турĕç, комбайнсемпе ĕçлекен кадрсене вĕрентсе хатĕрлессишĕн тăрăшмарĕç. Çавна пула комбайнсем ĕçре чарăна-чарăна тăчĕç, çакна пула тырпула пухса кĕртес ĕç вăраха кайрĕ. Республикăри чылай районсенче тырра жнейкăсемпе, косилкăсемпе тата кĕреплеллĕ çавасемпе пухса илес ĕçе кирлĕ пек хакламанни курăнчĕ. Октябрьски, Ишлей, Куславкка, Первомайски районсенче жнейкăсемпе косилкăсене вăхăтра юсаса ĕçе кăлараймарĕç, çавна пула тырра ытларах алăпа вырмалла пулчĕ, ĕç вăраха юлса пычĕ. Çакнашкал çитменлĕхсем кăçал пачах ан пулччăр. Кашни машинăна вăхăтра юсаса лартар, унпа ĕçре туллин усă курса тырпула хăвăрт пуçтарса илмелле тăвар!

Совет Информаци Бюровĕнчен

Майăн 24-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Майăн 24-мĕшĕнче фронтра паллă улшăнусемех пулман.

Хура тинĕсри пирĕн карапсемпе авиаци тăшманăн хăй тĕллĕн çӳрекен 6 баржине путарнă, пĕр транспортне вут тивертнĕ.

* * *

Майăн 23-мĕшĕнче пирĕн авиаци чăçĕсем фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче нимĕçсен войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 20 автомашининчен кая мар пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, чугунçул эшелонне çĕмĕрнĕ, боеприпассен складне сирпĕнтерсе янă, артиллерипе минометсен 5 батарейине пусарнă.

* * *

Хĕвеланăç фронтĕнче пирĕн чăçсем 200 нимĕç салтакĕне офицерне ытла вĕлернĕ, 2 блиндажа ишĕлтерсе антарнă тата артиллерипе минометсен темиçе батарейине пусарнă. Пĕр участокра Найденов юлташ ертсе пыракан разведчиксен отрячĕ тăшманăн блиндажне кĕрсе кайнă та 50 гитлеровеца вĕлернĕ. Разведчиксем 6 блиндажа аркатса тăкнă, пĕр пулемет тата миномет тытса илнĕ, темиçе çынна тыткăна илнĕ. Хăйне панă задание пурнăçа кĕртсен, отряд хăйĕн позицийĕсем патне таврăннă.

* * *

Лисичанск районĕнче пирĕн подразделенисем май уйăхĕнчен пуçласа тăшмантан çакăн пек трофейăсем тытса илнĕ: 12 оруди, 47 миномет, 229 пулемет, 2.603 винтовка, 61 противотанковăй пăшал, 152 автомат, 30 гранатомет, 9 радиостанци, 100.000 патрона яхăн тата тĕрлĕ çар пурлăхĕсем тытса илнĕ.

* * *

Дон çинчи Ростовран хĕвеланăçнерехре артиллерипе минометсенчен персе 5 нимĕç блиндажне пĕтерсе тăкнă, 15 автомашинăна çĕмĕрнĕ, артиллерипе минометсен 10 батарейине пусарнă. Пĕр участокра нимĕç пехотин батальонĕ çапăçса пырса разведка тума хăтланнă. Пур йышши хĕçпăшалсенчен те пеме пуçласан, нимĕçсем пĕр йĕркесĕр хăйсен малтанхи позицийĕсем патне чакнă. Çапăçу хирĕнче тăшманăн 100 вилли ытла вырта юлнă.

* * *

Нимĕçсен 28 самолечĕ Рыбачий тата Средний çурутравĕсен районĕнче пирĕн çар обьекчĕсене тапăнма хăтланнă. Совет авиацийĕ тăшман самолечĕсене çав района ямаН. Сывлăшри çапăçусенче пирĕн легчиксем 10 нимĕç самолетне персе ӳкернĕ.

* * *

Киев облаçĕнче Ленин ячĕпе хисепленекен отрядри партизансен ушкăнĕ чугунçул çине минăсем хурса тухнă. Партизансем хунă минăсем çине пырса кĕрсе, тăшманăн çар эшелонĕ сирпĕнсе кайнă. Вагонсен ванчăкĕсем айĕнче нумай нимĕç салтакĕпе офицерĕ вилнĕ. Чапаев ячĕпе хисепленекен отрядри партизан-подрывниксем тăшманăн хĕçпăшалсемпе боеприпассем турттарса пыракан эшелонне ӳпĕнтерсе янă. Пĕр паровоз тата 18 вагон çĕмĕрĕлнĕ.

* * *

Нимĕçсен 15-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи 15-мĕш самокатнăй батальонран тыткăна лекнĕ Фридрих Фогт салтак çумĕнче унăн тăванĕсемпе пĕлĕшĕсем çырнă çырусене тупнă. Аяларахра çав çырусенчен хăшпĕр вырăнсене илсе пичетлетпĕр:

«Мартăн 21-мĕшĕ. Хаклă Фридрих! Вутта ан кĕр. Пысăк шăтăка пытан та унта çапăçу пĕтичченех вырт. Каялла чакас пулсан пĕтĕм вăйпа тăван çĕршыва тар. Адольф Гауш тата Антон Шельĕн ывăлĕ январĕн 20-мĕшĕнчен вара нимĕн те çырмаççĕ. Вĕсемпе пĕрле пулнă салтак вĕсем 400 километр чакни çинчен, вырăссем вĕсене пĕр чарăнмасăр хăваласа пыни çинчен çырнăччĕ».

Апрелĕн 5-мĕшĕнче çырнă çырура çапла каланă: «Тăван çĕршыв патне çывăхарнă чухне кая ан юл. Людвиг çапла каларĕ: каялла чакакан нимĕç вăл телейлĕ, мĕншĕн тесессĕн унăн киле таврăнма шанчăк пур, терĕ. Ытла хăрушă пулса тăрсассăн, аллуна тăрат...»

Апрелĕн 10-мĕшĕнче Германирен Фогт патне янă çырура çапла каланă: «Санăн малти позицие каясран пăрăнса юлмалла. Ыттисем пекех ăслă пул. Санăн нервусем килтех йĕркеллĕ марччĕ. Врача кала: эпĕ чирлĕ, те, эпĕ урăх вăрçма пултараймастăп, те. Российăран тухса кайма тăраш. Вăрçине çитĕ. Штифель унтан тухса кайрĕ вĕт. Пирĕн пурне те çухатмалла-и вара? Мĕн валли çухатмалла? Унтан кайма тăраш».

* * *

Орел облаçĕнчи Покровски районри ялсем 17 уйăх хушши нимĕçсен аллинче тăнă. Çав вăхăт хушшинче гитлеровецсем районри 407 çынна персе е асаплантарса вĕлернĕ. Нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем Покровски районри Германири каторгăна 2.897 совет гражданне хăваласа кайнă. Гитлеровецсем хресченсене пĕтĕмĕшпех çаратнисĕр пуçне тата электростанцие, пекарньăна, 39 шкула, 8 библиотекăна, МТС-ăн 5 çуртне, колхозниксен 1950 çуртне тата ытти çурт-хуралтăсене те çунтарса янă.

Майăн 25-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Майăн 25-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле фронтсенче нимĕнле паллă улшăнусем те пулман.

* *

Новороссийскран çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре пирĕн артиллеристсем нимĕç артиллерийĕн 5 батарейине пусарнă, хăй тĕллĕн çӳрекен орудие, темиçе автомашинăна тата тăшман пехотине пĕр ротăна çити пĕтерсе тăкнă.

* * *

Лисичанск районĕнче пирĕн подразделенисем нимĕçсен 80 салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă. Пĕр чаçăн артиллеристĕсем тăшман позицине тапăннă. Артиллерирен персе тăрса нимĕçсен 6 блиндажне, 3 дзотне аркатнă, пĕр орудие, 15 автомашинăпа лава пĕтерсе тăкнă, боеприпассен складне сирпĕнтернĕ.

* * *

Изюмран кăнтăртарахра пирĕн чаçсем артиллерипе минометсенчен персе нимĕçсен 2 орудине пĕтерсе тăкнă, 6 дзота, 5 блиндажа тата висĕ наблюдательнăй пункта аркатнă. Тепĕр участокра тăшман отрячĕ çапăçса пырса разведка тума хăтланнă. Пĕр чаçăн боевой хуралĕ нимĕçсене малтанхи вырăна чакмалла тунă. Çапăçу хирĕнче тăшманăн 60 вилли таран вырта юлнă.

* * *

Севск районĕнчи пĕр участокра нимĕçсен роти пирĕн позицие атакăлама хăтланнă. Совет боецĕсем гитлеровецсене çывăха янă та пăшалсемпе пулеметсенчен пеме пуçланă. Вилнисемпе аманнисене 40 çын пăрахса хăварса, нимĕçсем пĕр йĕркесĕр каялла чакнă.

* * *

Ленинград облаçĕнчи районсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен отрячĕ нимĕçсен карательнăй экспедицийĕпе икĕ кун хушши çапăçса 100 ытла гитлеровеца вĕлернĕ, 4 çынна тыткăна илнĕ. Партизансем 3 миномет, 2 пулемет, 4 автомат, 69 винтовка, патронсем тата гранатăсем нумай тытса илнĕ. Партизан подрывниксен ушкăнĕ нимĕçсен 3 çар эшелонне ӳпĕнтерсе янă. Крушени пулнипе 3 паровоз, тĕрлĕ çар грузĕсем тиенĕ 69 вагонпа платформа тата бензин тултарнă 3 цистерна пĕтнĕ. Тепĕр чугунçул çинче партизансем тăшманăн икĕ эшелонне сирпĕнтерсе янă. Икĕ паровоз тата 34 вагон арканнă.

* * *

Нимĕçсен 123-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи 418-мĕш полкран Хĕрлĕ Çар енне куçнă Ганс Ф. салтак çапла каласа панă: «Март уйăхĕнче эпĕ Берлинра пултăм. Мартăн 3-мĕшĕче Англи авиацийĕ Берлина тапăнчĕ. Темиçе маршевăй батальон ытти войскă чаçĕсемпе пĕрле бомбăсем пăрахнине пула ишĕлнĕ çуртсене тасатрĕç. Берлинăн хĕвеланăç пайĕ пуриншчен ытларах сиен курчĕ. Кайзер Ейхе площачĕ патĕнчи Илшграссе урамне пĕтĕмпех аркатнă. Прагерплац-Винтерфельдплац, Винтерфельдштрассе тата Ферберлинерплац площачĕсемпе урамĕсенчи çуртсен висĕ пайĕнчен икĕ пайĕ фугаслă шултăра бомбăсем пăрахнине пула арканнă. Галензе вокзалĕнчен ишĕлчĕксем кăна юлнă. Кайзераллейăри СС тата жандармери çуртне аркатнă».

* * *

Югославри партизанĕсем Плевлье-Биелполе районĕнче итальянецсемпе нимĕçсен шултăра вăйĕсене хирĕç хаяррăн çапăçаççĕ. Пĕр кун хушшинче кăна çав районта патриотсем 200 гитлеровеца çити пĕтерсе тăкнă. Партизансем Биоче местечкинчи итальянецсен гарнизонне аркатса тăкнă. Çав гарнизонри 400 итальянец салтакĕ таран тыткăна параннă, ыттисене вĕлерсе пĕтернĕ. Партизансем çакăн пек трофейăсем тытса илнĕ: 2 противотанковăй оруди, 2 гаубица, 9 миномет, 20 пулемет, 600 винтовка, апат-çимĕç склачĕ тата тĕрлĕ çар хатĕрĕсем.

Чăваш АССР Совнаркомĕнче

Пурăнмалли çуртсемпе коммунальнăй предприятисен социализмлă ăмăртăвĕ çинчен

Чăваш АССР Совнаркомĕ республикăри пурăнмалли çуртсемпе коммунальнăй хуçалăх предприятийĕсен социализмлă ăмăртăвĕн условийĕсене çирĕплетнĕ.

Ăмăртура мала тухнă тесе çакăн пек предприятисене шутламалла тунă:

Жилуправленисенчен — çуртсене капитальнăй ремонт тумалли плана ирттерсе тултарнă, финанс планне пĕтĕмпех тултарнă, çуртсене таса тытнă управленисене;

мунчасенчен —çынсене çăвăнтарас плана ытлашшипех тултарнă, сезонран сезона куçмалăх вутă ытлашшипех хатĕрлесе хурса ăна перекетленĕ, мунчасене таса тытса çынсене çăвăнма лайăх условисем туса панă предприятисене;

прачечнăйсенчен—çумалли япаласене пысăк пахалăхпа çуса плана тултарнă, вутă, супăнь тата ытти кирлĕ япаласене перекетлесе хăварнă, заказсене кĕске срокра пурнăçласа пынă прачечнăйсене;

хуласене тасатакан предприятисенчен — хулана тасатса, тасамарлăхсене турттарса кăлармалли плана ытлашшипех тултарнă, лашасем валли апат çителĕклĕ хатĕрлесе хурса вĕсене лайăх пăхнă, пурте пĕрле усă куракан вырăнсене ялан таса тытнă тата хулана тасатас ĕçе общественноçа хутшăнтарнă предприятисене.

Ăмăртăвăн итогĕсене кашни уйăхрах пăхса тухаççĕ. Ăмăртура мала тухнă предприятисене пама Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне тунă. Хĕрлĕ Ялава илекене ĕçре палăрнă инженерла-техникла работниксене премилеме 8 пин тенкĕ укçа памалла тунă. Социализмлă ăмăртăвăн условийĕсене пурнăçланă чи лайăх предприятисене ĕçре палăрнă инженерла-техникла работниксене премилеме çакăн пек премисем памалла тунă: пĕрремĕш преми—4 пин тенкĕ, иккĕмĕш преми —2 пин тенкĕ.

Комсомол йышĕ ӳсет

ЭЛĔК. Панклири туллимар вăтам шкул çумĕнчи комсомол организацине татах 11 сын хутшăнчĕ. Комсомола кĕнисем хушшинче вĕренекенсем, ялти çамрăксем тата учительсем пур.

А. Тимофеев.

Нимĕç самолечĕсем Батайска тапăнни

Майăн 24-мĕшĕнче ирхине нимĕç самолечĕсен ушкăнĕ Батайск чугунçул станцине тапăннă. Станци патне пирĕн тупăсен вут-хĕмĕ урлă тăшманăн хăшпĕр самолечĕсем кăна каçса кайма пултарнă. Пăрахнă бомбăсем пурăнмалли çуртсене пăртак сиен кӳнĕ. Вилнисем тата аманнисем пур. Станцири чугунçул сооруженийĕсем сиен курман.

Тăшман тапăннине сирсе янă чухне пирĕн истребительнăй авиаци тата зенитнăй артиллери нимĕçсен 13 самолетне персе ӳкернĕ. Пирĕн 3 самолет пĕтнĕ.

ВЦСПС-ра

Профсоюзсен Пĕтĕм Союзри Центральнăй Совечĕ автомобиль промышленноçĕн заказĕсене пурнăçлакан заводсенче ĕçлекенсен Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвĕн 1943 çулхи апрельти итогĕсене пăхса тухса, Бунин юлташ директор заместителĕ пулса ĕçлекен завода иккĕмĕш преми пама йышăннă.

ОТЕЧЕСТВЕННĂЙ АСЛĂ ВĂРÇĂ ФРОНЧĔСЕНЧЕ

Тыткăна лекнĕ боецсене фашистсен лагерĕнче асаплантарни

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ, майăн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Фашистсен тыткăнĕнчен тарса тухнă красноармеецсем нимĕçсен фашистла палачĕсем Хĕрлĕ Çарăн тыткăна лекнĕ боецĕсемпе командирĕсене мĕн тери тискеррĕн асаплантарни çинчен каласа кăтартаççĕ.

Акă мĕн каласа парать Степан Булыгин хăй «вилĕм лагерĕнче» пурăнни çинчен:

— Пире, йывăр аманнă пирки хирĕç тăма пултараймансскерсене, нимĕçсем çапăçу хирĕнче каçхине тытса илчĕç. Пĕр яла илсе çитерчĕç те сарайне пăрахрĕç. Питех те вăрăма пычĕ вăл çĕр. Сурансем ыратаççĕ, чĕре çӳçенет. Малтанхи шуçăм çутти килсенех, боецсен пĕр ушкăнне хăваласа кăларчĕç те кил хушшине тăратрĕç.

— Ну, апла-тăк, пер, йытă! — терĕ пуçĕнчен мина татăкĕ тивсе аманнă боец.

—Никс!— тесе çухăрса ячĕ гитлеровец, çавăнтах красноармееца питĕнчен чăпăрккапа çапрĕ.

Нимĕçсем пирĕн пата пырса пирĕн алă-урасене çыхса лартрĕç. Чышкăпа çапса ӳкерсе, çĕр тăрăх сĕтĕрсе çӳрерĕç. Сĕтĕрсе пырса пуçа пĕрене татăкĕсем çине хураççĕ те пуçран хĕнеме пуçлаççĕ.

Алабушев боец çапла каласа парать:

— Лагерьте пирĕнтен кашни кунах мăшкăллатчĕç. Çав тери асаплантарнине тӳсеймесĕр, лагерьтен 10 çын тарчĕç. Çавăн чухне вара эсэсовецсем урсах кайрĕç. Вĕсем тыткăна лекнĕ боецсенчен 40 çынна суйласа илчĕç те пуçран хĕнесе пуçĕсене йăлтах çĕмĕрсе мунчалантарса ячĕç. Кунпа çитмерĕ. Пĕр çуртра чирлĕ красноармеецсем выртатчĕç. Палачсем çавăнта икĕ граната пăрахрĕç. Ку та сахал туйăнчĕ çынçиенсене. Тепĕр кунне ирсĕрсем тыткăна лекнĕ Федорова ярса тытрĕç те аллисене çурăм хыçнелле çыхса лартса урлă юпаран çакрĕç. Юнĕçенсем Федорова çавăн пек тискеррĕн икĕ кун, икĕ çĕр асаплантарчĕç.

Сомов красноармеец çакăн пек каласа кăтартать:

— Тыткăна лексен, пире пĕр ял урлă илсе кайрĕç. Урампа пынă чухне хĕрарăмсем нимĕçсен хураллаcа пыракан салтакĕсен хушшипе кĕрсе кайса пире çăкăр, сĕт, хăярсем пачĕç. Анчах та кам та пулин çавсене илес тесе аллине тăссанах, нимĕçсем ăна прикладпа пуçран хĕнеме тытăнатчĕç. Ултă боец çĕртен пĕрер татăк çăкăр пĕшкĕнсе илчĕç. Гитлер бандичĕсем вĕсене пĕр çавăншăн кăна персе пăрахрĕç... Унтан пире 500 çынна ытла пĕр сарайне хупса лартрĕç. Унта эпир висĕ талăк пурăнтăмăр. Пиртен нумайĕшне унта пит те тискеррĕн асаплантарчĕç. Манпа юнашар халран кайнă красноармеец выртатчĕ. Нимĕç ăна сенĕкпе чиксе вĕлерчĕ. Çав сарайĕнче выçăпа аптăраса тата йывăр асап кăтартнине пула кунсеренех 10—15 çын вилетчĕç. Эпĕ çавăн пек тамăка чăтма пултарайманнипе тартăм. Анчах мана тытрĕç. Хальхинче гитлеровецсем манăн алăсене çапа-çапа хуçрĕç, ыванăччен хĕнерĕç, эпĕ тăнран кайрăм. Тепĕр кунне, хама хам пĕлекен пулсан, мана юпа çумне çыхса хучĕç. Эпĕ çав юпа çинче икĕ талăк хушши ытла çакăнса тăтăм.

Тăрăшса вĕренетпĕр

Эпир, Инçетри Хĕвелтухăçĕнче пурăнакан чăваш боецĕсем, ытти тăванла халăхсен ывăлĕсемпе пĕрле политикăна тата çапăçу ĕçне вĕреннĕ çĕрте пысăк çитĕнӳсем турăмăр. Пирĕн хушăра вĕренӳ отличникĕсем нумай. Вĕсем Сталин юлташăн приказне пурнăçлассишĕн пĕтĕм вăйран тăрăшаççĕ. Кунта килнĕ чухне эпир пурте рядовой боецсемччĕ. Халь пирĕнтен нумайĕшĕ кĕçĕн командирсем пулса тухрĕç.

Мана, ВЛКСМ пуçламĕш организацин секретарĕ пулса ĕçлекенскере, чăваш боецĕсем сирĕнпе çыхăну тытма, чăваш халăхĕн ывăлĕсем çĕршывăн инçетри Хĕвелтухăç чиккине мĕнле сыхлани çинчен пĕлтерсе тăма хушрĕç. Хамăр панă сăмаха эпир тивĕçлипе пурнăçласса шанса тăрăр.

В. Игнатьев.

Тракторсем ирхи çĕртме тăваççĕ

ЕЛЧЕК, майăн 25-мĕшĕ. (Телефонпа). МТС çураки планне 152 проц. тултарнă хыççăн халь пур тракторсене те ирхи çĕртме тунă çĕре куçарчĕ. Паянхи куна пирĕн район ирхи çĕртме сухине пурĕ 1.501 гектар турĕ. Ку шутран 1.000 гектарне тракторсемпе сухаланă.

Ирхи çĕртме тунă çĕрте тракторристсем ĕç тухăçне татах та ӳстерĕç. Кĕске вăхăт хушшинче 10-мĕш номерлĕ бригада 300 гектар ытла сухаларĕ. Ирхи çĕртмене ку бригадăран кайрах тухнă Спиридонов, Васильев юлташсен тракторĕсем те çĕршер гектар сухаларĕç.

Пахча-çимĕçсене çĕрулми лартса пĕтерме май çĕрен пулшакан лашасене колхозсем те тӳрех ирхи çĕртме тăвас ĕçе куçараççĕ. Районра малта пыракан Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз хăйĕн лашисемпех 150 гектар ирхи çĕртме сухи турĕ. Çавăн пекех «Марс» колхоз 110 гектар, «МОПР» колхоз 110 гектар сухаланă.

С. Макаров,
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

Государство умĕнчи парăмсене татмалла

ЭЛЕК. Çулавăçри «Октябрь» колхоз ку таранччен те ĕçе вăрçă вăхăчĕ ыйтнă пек тума тытăнманха. Тăшмана çĕнтермешкĕн Хĕрлĕ Çара пур тĕрлĕ апат-çимĕçсемпе çителĕклĕ тата вăхăтра парса тăмалла. Анчах «Октябрь» колхоз государство умĕнчи 1942 çулхи парăмне те парса татман. 1942 çулшăн 26 центнер яхăн тырă, 36 центнер кантăр вăрри, 192 центнер ытла çĕр[illegible], 21 центнера яхăн утă памасăр юлнă.

Республикăри нумай колхозсем хăйсен парăмĕсене 1944 çулшăн та парĕç. «Октябрь» колхоза государство умĕнчи парăмне вăхăтра тултарас пирки шухăшламан çук. Вĕсем натуроплата тырăпне те 7С центнер илмен пулас. 1942 çулшăн 616 литр сĕт, 2.247 çăмарта паман.

Çак парăмсене татас пулать, çĕнĕ обязательствăсене вăхăтра пурнăçлас пулать.

М. Ильин.

ХУДОЖЕСТВĂЛЛĂ СМОТРА ХАТĔРЛЕНЕÇÇĔ

КАНАШ. Вăтакас-Татмăшри туллимар вăтам шкулта вĕрентекенсемпе вĕренекенсем художествăллă пултарулăх смотрне хатĕрленеççĕ. Уйрăмăнах ку ĕçпе Ю. Андрамонова тăрăшса ĕçлерĕ. Çак кунсенче вăл ертсе пынипе художествăллă пултарулăх смотрне хатĕрленине тĕрĕслемелли вечер пулса иртрĕ. Вечерта уйрăмăнах Т. Горбатова, Фрося Салмина вĕренекенсем «Казачек», «Яблочко», «Дуня» ташăсене пысăк мастерлăхпа ташласа пачĕç, ытти физкультура упражненийĕсен номерĕсене тунă чух та вĕсем смотра тивĕçлипе хатĕрленни палăрчĕ. Шкулти драм кружок Ф. П. Павлов çырнă «Судра» комедие лайăх выляса пачĕ. Уйрăмăнах Катăкçăвар рольне вылякан Володя Смирнов тата Каюра Крахьянĕ рольне вылякан Нина Капитонова лайăх вылярĕç. В. Смирнов тунă «Гитлер çарĕ Сталинградран тарать» карикатурăна пĕтĕм халăх тĕлĕнсе пăхрĕ.

Т. Турхан.

Сталинграда юсаса йĕркеленĕ çĕре хутшăнасси—пирĕн тивĕçлĕх

Атăлăн хурçă крепоçĕ — Сталинград — вăрçă суранĕсенчен сывалма тытăнчĕ. Пĕтĕм халăх хăйĕн патриотла тивĕçне туса паттăр хулине юсас ĕçе хутшăнать. Колхозлă ял «Сталинград гектарĕсем» акать, вăрлăх, апат-çимĕç продукчĕсем парса пулăшать, хула ĕççыннисем Сталинграда юсама строительство материалĕсемпе инструментсем, моторсем, паровоззсем, çыхăну хатĕрĕсем т. ыт. те парса тăраççĕ.

Чăваш республикинчи ĕççыннисем те Сталинград хулине юсас ĕçе хăйсен патриотла тивĕçĕ тесе шутлаççĕ. Республикăри заводсемпе фабрикăсенче, колхозсемпе МТС-сенче, шкулсемпе больницăсенче нимĕç захватчикĕсенчен ирĕке кăларнă районсене пулăшмалли воскресниксем пулса иртреççĕ.

Чăваш ВЛКСМ Обкомĕ йышăннă тăрăх, комсомолăн республикăри организацийĕсем апрель уйăхĕнче иртернĕ воскресникре пĕтĕмпе 23.000 çын хутшăннă. Вĕсем пĕр кун хушшинче 59.670 тенкĕлĕх ĕçленĕ, 819 ĕçкунĕ тунă, ирĕке кăларнă районсенчи ĕççыннисене пулăшма 1.541 пăт тырă пухнă. Çак укçаран 51.000 тенкине Сталинграда юсаса йĕркеленĕ çĕре пама госбанка хывнă; Канаш хули районĕ — 23.000 тенкĕ, Октябрьски район — 15.000 тенкĕ, Улатăр хули — 7.000 тенкĕ панă.

Сĕнтĕр районĕнчи Кашмашри «Свобода» колхозри комсомолецсемпе çамрăксем (ВЛКСМ пуçламăш организацин секретарĕ П. Семенова) мухтава тивĕç ĕç пуçарнă. Вĕсем нимĕç пусмăрĕсенчен ирĕке кăларнă районсене пулăшма кĕске вăхăт хушшинче 1.080 пăт вăрлăх пухнă. «Свобода» колхоз çамрăкĕсен паха пуçарăвне республикăри чылай колхозсенчи комсомолецсем йышăннă.

Улатăр хулинчи комсомолецсемпе çамрăксем Сталинград валли хăйсен хăйĕне паровоз-электростанци юсаса тăрĕленĕ. Май уйăхĕ умĕн фронтовой бригади бригадирĕ Гаврилов хăйĕн тусĕсемпе Черноуров, Степанов, Лукин тата Доронин слесарьсемпе ĕç пĕтнĕ хыççăн та кану вăхăтĕнче депоран тухма пĕлмен. Вĕсем пăрахăçа тухнă паровоз-электростанцине хĕрсех юсанă. Улатăр узелĕнчи комсомол комитечĕн секретарĕ Рябчиков депона тăтăшах çӳресе, патриотсене хавхалантарнă. Ватă рабочисем комсомолецсене канашпа, ĕçпе пулăшса тăнă.

Паровоз-электростанци хатĕр. Ун пек ĕçсем Сталинград юсанă çĕре усă курма тытăнĕç.

Канаш хулинчи çамрăксем те Сталинград ĕççыннисем валли 1.000 ытла тĕрлĕрен инструментсем, 30 табуретка, 200 простынь, 100 мăшăр чăлха пухнă.

Чăваш халăхĕ Сталинграда юсама хăйĕн ĕçчен ывăл-хĕрĕсене ярать. Комсомол райкомĕсемпе горкомĕсене вуншар çамрăксем пырса хăйсене Сталинграда хулана юсанă çĕре яма ыйтаççĕ. Паянхи кун тĕлне 300 ытла комсомолецăн заявленисем пăхса тухнă. 267 çамрăк патриот çак кунсенче Сталинград хулине тухса кайнă.

«Вăйлăмăрсем, ĕçре хастар пулăр. Ывăрлăхсем килсе тухсан, çĕнĕ хăюлăн çĕнтерĕр. Хĕрĕмĕрсем, эсир те мухтава тивĕç ĕçлĕр!»—çакăн пек ăсатрĕ пирĕн халăх хăйĕн ывăл-хĕрĕсене герой-хулана юсама хутшăнма. Пирĕн иккĕлентерни те çук: вĕсем, Сталинграда мухтавлăн хӳтĕленĕ чăваш боецĕсем пекех, çĕнĕ хăйсен пултарулăхне кăтартĕç.

Сталинграда юсас ĕçе хутшăннă ĕççыннисене чăваш халăхĕ паракан пулăшу кулленех ӳссе, вăйланса пырать.

П. Н.

КОМСОМОЛЕЦСЕМ СТАЛИНГРАДА КАЙРĔÇ

КАЛИНИНО. (Хамăр корр.). ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ Степанова юлташ патне кашни кунах вуншар çамрăк пырать. Пурте вĕсем Сталинграда — историллĕ хулана хăвăртрах юсаса ура çине тăратма каясшăн тăрăшаççĕ.

Нумаях пулмасть комсомол райкомне икĕ çамрăк хĕрача килчĕç. Вĕсенчен пĕри—Ямбахтинăри «Партизан» колхозри комсомолка Евдокия Краснова, тепри — Услапари «Броневик» колхозри паллă конюх—комсомолка Ольга Тарасова. Иккĕшĕ те вĕсем хăйсене Сталинграда яма ыйтаççĕ.

Калинино больницинче ĕçленĕ Татьяна Шамкина çакăн пек заявлени çырса панă: «Мана Сталинград хулине юсакансен ретне тăмашкăн пулăшма ыйтатăп. Геройла хулана юсаса ура çине тăратма эпĕ комсомолка пулса каясшăн. Мана комсомол ретне илме тата Сталинграда хăвăртрах яма ыйтатăп». Карачураран килнĕ Пимен Тимофеев та хăйне комсомол ретне илсе, Сталинград хулине яма ыйтать.

ВЛКСМ райкомĕ комсомолецсен ыйтăвĕсене тĕплĕн пăхса тухать. Пултарулла, шанчăклă комсомолецсемпе комсомолкăсене Сталинграда кайма пулăшать. Çак иртнĕ кунсенче районри колхозсенчен 15 комсомолец Сталинграда тухса кайрĕç. Вĕсем унта стахановецсем пулса ĕçлеме çирĕппĕн шантарчĕç: «Колхозра та вăйлăн ĕçлерĕмĕр, кунта татах та тăрăшарах ĕçлетпĕр», терĕç.

С. Шадин.

ШКУЛТИ ПĔЛӲ ТĔРĔСЛЕВĔСЕМ

Директор хăй инструкцие пăсать

ИШЛЕИ, майăн 25-мĕшĕ. (Телефонпа). Вăтам шкулта чылай классенче икшер предметпа пĕлӳ тĕрĕслевĕсем пулса иртрĕç. Ĕнер 7-мĕш класра вырăс чĕлхипе (çыру ĕçĕ) тĕрĕслӳ пулчĕ. Тĕрĕслеве вырăс чĕлхине вĕрентекен С. Жарков юлташ (вăлах шкул директорĕ) иртерчĕ. Ассистент пулса Елена Брук учительница ларчĕ.

Малтанах çакна палăртмалла: тĕрĕслӳсене класри 26 вĕренекенрен 20-шĕ анчах пынă. Жарков юлташ çыру ĕçне çыртарнă та вĕренекенсен ĕçĕсене пухса илнĕ, вĕсене ассистентран пытарса пĕччене тĕрĕсленĕ. Вĕренекенсен начар пĕлĕвне пытарас тесе, вăл хăшпĕр йăнăшсене ачасем çырнă чернилăпа тӳрлетсе тухнă. Çыру ĕçĕсене «тĕрĕсленĕ» хыççăн çеç ассистента панă. Çавăн пирки ĕнер пулнă тĕрĕслевĕн итогĕсене халĕ те туса çитермен-ха.

Вăтам шкул — район центрĕнчех. Райçутĕç пайĕ пĕлӳ тĕрĕслевĕсен майăн 24-мĕшĕнчи итогĕсене Жарков юлташран икĕ хутчен те ыйтнă. Вăл вĕсене: «çын лаша мар вĕт, ултă сехет ĕçлесен те çитет»,—тесе ответленĕ.

Жарков юлташ вырăс чĕлхипе литературине ытти классенче те вĕрентет. Вăл вĕренӳ çулĕ тăршшĕпех вырăс чĕлхине вĕрентесси çине кирлĕ пек çавăрăнса пăхман, ачасене çирĕп пĕлӳ парассишĕн тăрăшман. 10-мĕш класра вырăс литературипе вĕренӳ программине пурнăçа кĕртмен.

З. Митрофанова.

ВĔРЕНЕКЕНСЕН АШШĔ-АМĂШĔСЕНЧЕН ИНÇЕТРЕ ТĂРАКАН ШКУЛ

ЭЛЕК. Шкулсенче пĕлӳ тĕрĕслевĕсем пуçланчĕç. Писĕп шкулĕнче ĕçлекенсем вĕренекенсене тата вĕсен ашшĕ-амăшĕсене пĕлӳ тĕрĕслевĕсен пĕлтерĕшĕ çинчен ăнлантарса паман. Çавна пула бригадирсем шкул ачисене ĕçе яраççĕ. Туллимар вăтам шкулăн учительници Сидорова юлташ Çулавăç урамĕсем тăрăх ачасене пĕлӳ тĕрĕслевне пыма чĕнсе çӳрет. Майăн 19-мĕшĕнче Çулавăç ялĕнчен 6 вĕренекен шкула пыман.

Шкулти учительсен коллективĕ пĕлӳ тĕрĕслевĕсене иртерме начар хатĕрленнĕ. Ку. çеç те мар, вăл пĕтĕм вĕренӳ çулĕ тăршшĕпех вĕренӳ ĕçне сӳрĕк туса пыни курăнать. Шкул вĕренекенсен ашшĕ-амăшĕсемпе таччăн çыхăнса ĕçлемен. Шкул дирекцийĕ вĕренӳ çулĕ тăршшĕнче вĕренекенсен ашшĕ-амăшĕсене пĕр хут та пухса калаçман, вĕсенчен инçетре тăнă. Шкул ачисем пĕлӳ тĕрĕслевĕсене йĕркеллĕ çӳременнин сăлтавĕ шăпах çакă пулса тăрать.

Кроса хатĕрленмен çĕрте

КАНАШ. ВЛКСМ Канаш райкомĕ (секретарĕ А. Павлова юлташ) çуллахи виççĕмĕш кроса иртерме темиçе эрне малтан план туса хатĕрленĕ. Ку ĕçе пĕтĕм комсомолпа профсоюз членĕсен активне явăçтармалла пулнă. План çине икĕ эрне малтан кашни организацисенчех тренировкăллă занятисем пуçламалла тесе çырса хунă.

Майăн 23-мĕшĕнче профсоюз членĕсемпе комсомолецсен çуллахи кросĕ пуçланчĕ.

Анчах Канаш районĕнче çав кун нихăш организацирен те пĕр çын та кроса хутшăнман.

— Районĕпе кроса 1.006 çын хутшăнмалла. Майăн 23-мĕшĕнче çанталăк çумăрлăрах пулнипе хутшăнмарĕç,—тет ВЛКСМ райкомĕн учет заведующийĕ Михайлов юлташ.

«Комсомол», «3-мĕш пятилетка», «Чăваш ЦИК» колхозсенчи пуçламĕш комсомол организацийĕсенче кроса хатĕрленес енĕпе нимĕн те туман.

Çавăн пекех шкулсенче те ку ĕç тивĕçлипе пулса пымасть. Тĕслĕхрен, Вăрăмпуçĕнчи туллимар вăтам шкулта (директорĕ Евлампьев юлташ) кроса пĕр ачана та явăçтарман.

Канаш районĕнче кросс пĕлтĕр те ăнăçлăн иртменччĕ. Анчах ВЛКСМ райкомĕн работникĕсем унтан тивĕçлĕ вывод туман.

Ют çĕршывсенче

АМЕРИКА ДЕЯТЕЛĔСЕМ РУЗВЕЛЬТ ПАТНЕ ЯНĂ ÇЫРУ

НЬЮ-ЙОРК, майăн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Америкăри 220 паллă деятель Рузвельт патне янă хăйсен çырăвне пичетлесе кăларнă. Вĕсем çав çырура Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсене Финляндипе çыхăну тытма пăрахса, ăна хирĕç вăрçă пуçласа яма чĕнеççĕ. Çырура çакна кăтартнă: Финлянди Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен союзникĕсемпе вăрçать. Финляндие «лăплантарас» политика «Финлянди халăхĕн пысăк пайне тĕнĕл держависемпе тунă пусмăрлă союзран çăлăнса тухма» чăрмантарса тăрать. Финлянди çарĕ, — тенĕ çырура, — пирĕн союзникпе — Совет Союзĕпе вăрçать, унăн Германие хирĕç таткăлă наступлени пуçласа яма кирлĕ салтакĕсемпе хĕçпăшалĕн пĕр пайне çав ĕçрен пăрса тăрать. Финляндия вăрçман пулсан, Ленинграда та çав тери усал блокада тăвайрас çукчĕ, нумай çынсен пурнăçне çăлса хăварма май пулнă пулĕччĕ. Нацистсен самолечĕсемпе подводнăй лодкисем Финлянди çĕрĕнчи базăсемпе усă кураççĕ. Финляндия çав базăсене нимĕçсене кăмăлласах парса тăрать, вĕсемпе усă курса вара нимĕç самолечĕсемпе подводнăй лодкисем пирĕн хаклă япаласем турттарса пыракан суднăсене шыва путараççĕ. Америка морякĕсем çав хăрушă шывсенче нумай пĕтнĕ. Çыру авторĕсем çапла калаççĕ: «Финляндия малашне те пирĕн союзниксемпе вăрçса тăни нумай американецсен пурнăçĕсене пĕтерĕ тата вăл вăрçă пĕтес вăхăта та тăсса тăрать».

Çыру авторĕсем хушшинче çаксем пур: Нью-Йоркри университет профессорĕ Варнув, Мичиганри университет профессорĕ Карпинский, Денверти раввин Авраам Файнберг, «Американ Унитариан Ассошиэйшен» председателĕ Элиот, Детройтри епископ Киароччи, издатель Холдеман Джулиус, паллă антрополог Хрдличка т. ыт. те.

США-ра ÇАР НУШИСЕМ ВАЛЛИ ÇĔНĔРЕН УКÇА-ТЕНКĔ ПАНИ

ВАШИНГТОН, майăн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Рузвельт конгреса çитес бюджет çулĕнче çар нушисем валли 72 миллиард доллара яхăн укçа-тенкĕ пама сĕннĕ. Вăл малтан палăртса хунинчен 6 миллиард доллар ытларах пулать. Рузвельт сĕннĕ тăрăх; çав çулхинче тумалли самолетсен пĕтĕм йывăрăшĕ 1.417 миллион фунта çитмелле (пĕлтĕр тунă самолетсен пĕтĕм йывăрăшĕ 911 миллион фунта çитнĕ), çарта тăракан çынсен хисепĕ 8 миллиона çитмелле тата хĕрарăмсенчен пулăшу чаçĕсем организацилемелле, вĕсенче 375.000 хĕрарăм пулмалла. Çав сĕнӳ тăрăх, уйрăм фондсем уйăрса хумалла. Вăл фондсенчи укçа урăх государствăсенчи тĕрлĕрен строительствăна каймалла. Флот валли палăртса хунă 29 миллиард долларпа пĕрле шутласан, çар нушисем валли памалли укçа-тенкĕн пĕтĕм сумми çитес бюджет çулĕнче 100 миллиард доллартан иртсе каять.

АМЕРИКĂН 14 ÇАР КАРАПĔ ÇĔНĔРЕН СТРОЯ ТĂНĂ

НЬЮ-ЙОРК, майăн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Тинĕс-çар командованийĕн представителĕ каланă тăрăх, американецсен 1941 çулхи декабрĕн 7-мĕшĕнче Япони авиацийĕ Пирл-Харбора тапăннă чухне шыва путарнă е сиенленĕ пысăк карапĕсем чылайĕшĕ çĕнĕрен строя тăнă ĕнтĕ. Хăй вăхăтĕнче 19 карап çинчен вĕсене шыва путарнă е сиенленĕ тесе пĕлтернĕччĕ. Халĕ çав карапсенчен 14-шĕ çĕнĕрен строя тăрса действующи флотра тăшманпа çапăçаççĕ. Вĕсен шутĕнче 6 линкор, 3 крейсер. Ытти карапсене хăвăрт юсаççĕ.

Каялла строя тăнă карапсене пурне те çĕнетнĕ, халĕ вĕсем ĕлĕкхинчен нумай лайăхрах.

БОЛГАРИРИ МАССАЛЛА АРЕСТСЕМ

СТАМБУЛ, майăн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Турцин «Ля тюрки» ятлă хаçачĕ пĕлтернĕ тăрăх, çак юлашки икĕ эрне хушшинче Болгарире 3.000 çынна ытла арестленĕ. Тинĕс çыранĕ хĕрринчи чылай районсенче гестапо агенчĕсемпе эсэсовецсем тӳрех хăйсемех арестлеççĕ. Арестленисем хушшинче запасра тăнă офицерсем, хупса лартнă партисен деятелĕсем, профессорсем тата студентсем нумай.

Грецин болгарсем оккупациленĕ территорийĕ çинче болгар рабочийĕсене нумай арестленĕ. Вĕсене пурне те саботаж тунă тесе айăплаççĕ.

КĔСКЕН

★ Сывлăшри çапăçура Японин пĕрлешӳллĕ флочĕн главнокомандующийĕ адмирал Иосорку Ямамото вилнĕ.

СОЮЗНИКСЕН АВИАЦИЙĔН ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, майăн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, иртнĕ çĕрле Англи бомбардировщикĕсен пысăк вăйĕсем Рура тапăннă. Пуринчен ытла Дортмунд хулине тапăннă. Ку таранччен Германин пĕр хулине те кун пек вăйлăн тапăнни пулман. Дортмунд çине фугаслă тата вут тивертекен бомбăсем 2.000 тонна ытла пăрахнă. Çав операцирен Англин 38 бомбардировщикĕ каялла таврăнман.

Тăшманăн самолечĕсем ĕнер ирхине ирех Англин хĕвелтухăç çыранĕсенчи хăшпĕр хулисене атакăланă. Сиен кӳнĕ. Вилнисемпе аманнисем нумай пуль тесе шутлаççĕ. Вĕсем хушшинче çамрăк ачасем те пур. Пулеметпа персе хăшпĕр иртсе пыракан çынсене амантнă.

Вăтаçĕр тинĕс бассейнĕнче союзниксен авиацийĕ Пантеллерипе Сардини утравĕсене вăйлăн тапăннă. Пилĕк пысăк мар судно çине бомбăсем тӳрремĕнех пырса лекнине палăртнă. Бомбăсем пăрахнă темиçе аэродром çинче тăшманăн самолечĕсене сиенленĕ. Пур объектсенче те пушарсем тухнă тата взрывсем пулнă.

ГЕРМАНИ ВАССАЛĔСЕМ ПУЛСА ТĂРАКАН ÇĔРШЫВСЕНЧЕ ЭКОНОМИКА АРКАННИ

СТАМБУЛ, майăн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Фашистла хаçатсем хăйсемех йышăннă тăрăх, Германи вассалĕсем пулса тăракан çĕршывсенче: Румынире, Венгрире тата Италире экономика арканса пырать, выçлăх вăйланнăçемĕн вăйланса пырать, халăх тарăхса ӳпкелешни ӳснĕçемĕн ӳссе пырать.

Румынири хаçат-журналсем çырнă тăрăх, Румыни халăхне çак май уйăхĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа çăкăр эрнере икĕ хутчен кăна параççĕ. Çакайпа çу çинчен румынсем тахçанах маннă ĕнтĕ. Анчах ăна-кăна пăхса тăмасăр, «Донау Цейтунг» ятлă хаçат пĕлтернĕ тăрăх, «Румынирен халь выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем икĕ хут ытларах турттарса каяççĕ». Тавар хакĕсем, пĕлтĕрхипе танлаштарсан, тăватă хут ӳснĕ. «Комерцулуй» ятлă хаçат çапла çырать: «Вăрçă пĕтĕм Румыни çĕршывĕн пурнăçĕпе экономикине аркатса ячĕ»,—тет.

Германин тепĕр вассалĕ те—Венгри те—пысăк йывăрлăха кĕрсе ӳкнĕ. «Нейе Орднунг» ятлă гитлерла журнал çапла çырать: «Венгрире хĕсĕнсе пурăнма тивни ытларах та ытларах сисĕнме пуçларĕ... Вăл пĕтĕм пурнăça кичемлентерсе, салхулантарса тăрать». Журнал çак факта та йышăнмасăр иртсе кайма пултараймасть: гитлерла коалицие хирĕçле çĕршывсен пропаганди «Венгрири тата кăнтăр-хĕвелтухăçĕнчи ытти çĕршывсенчи халăхсен шухăш-кăмăлĕсене пăсать»,—тет вăл.

Чылай хаçатсем производство вăйлăн каялла чакса пынине палăртса çыраççĕ. Нумай предприятисен оборудованийĕ ĕçленипе кивелсе юрăхсăра тухнă ĕнтĕ.

Çавăн пекех Италире те производство вăйлăн каялла чакни уççăнах палăрса тăрать. Италин промышленность центрĕсем çине вĕçĕ-хĕррисĕр бомбăсем пăрахни, чĕртавар пачах та çитменни, транспортри паллă çитменлĕхсем çĕршыври пĕтĕм промышленность ĕçне пăсса тăраççĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Колхозсене пĕлсе тăма

Колхозсемпе уйрăм хуçалăхсенче акнă ялхуçалăх культурисене, колхозсенче садсемпе çырла пахчисене обязательнăй окладной страховани тăрăх: пăр çапасран, вăйлă çумăртан, тăвăлтан, тымартан çунассинчен, шăнса лараcсинчен, сивĕ тивесрен, шыв туласран; махоркăна хăмлана тата кунсăр пуçне уяр çанталăкран страховани тунă.

Ялхуçалăх культурисем асăннă инкексенчен сиен курни çинчен колхозсен инкек пулнă хыççăн пилĕк кун хушшинче районри страховой инспекцие пĕлтермелле, пĕччен хуçалăхсен ялсовет урлă пĕлтермелле.

Акса хăварнă культурăсем пĕтни е сиенленни çинчен вăхăтра пĕлтермесен, Госстрах страховой укçа памасăр тăма пултарать

Чăвашсен ялхуçалăх институчĕ

1943-44 вĕренӳ çулĕ валли агрономипе зоотехника факультечĕсен 1-мĕш курсне студентсем çĕнĕрен илесси çинчен пĕлтерет.

Заявленисене вĕренни çинчен калакан документпа тата автобиографипе пĕрле çак адреспа ямалла: Шупашкар хули, К. Маркс урамĕ, 34, Ялхуçалăх институчĕ, приемнăй комиссие. Заявленисене июнĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа августăн 31-мĕшĕччен илеççĕ. Кĕмелли экзаменсем сентябрĕн 15-мĕшĕнчен пуçласа 25-мĕшĕччен пулать. Вĕренӳ октябрĕн 1-мĕшĕнче пуçланать.

«Росглавнерыба» Шупашкарти ирех конторине районсенче пулă çимĕçсем тата çырла [illegible] агентсем кирлĕ. [illegible] адреса ямалла: Шупашкар хули, Коммунальный слобода, 21-мĕш çурт. Телефон 1—73 (9 [illegible]).

Фронтовиксен çырăвĕсем

34-мĕш атака умĕн

... Виççĕмĕш хут вăрçăра пуласси çинчен эпĕ мирлĕ вăхăтра шутламан та темелле. Аллă çула çитнĕскер, хам ирĕкпе вăрçă çынни пулса тăтăм.

Эпĕ аллă çулта пулсан та, манăн ăшра юн вĕресе тăрать. Темĕн пек сивĕсенче те алă-ура, питкуç шăннине астумастăп.

1941 çулта Тăван çĕршыва хаяр тăшман тапăнса кĕчĕ. Çамрăксене вăрçа иле пуçларĕç. Тăван çĕршыва хаяр та усал тăшманран сыхламалла. Эпĕ хамран-хам ыйтатăп: аллă çула çитрĕм, эпĕ ватă ĕнтĕ, вăрçă çыннисен ретĕнчен тухнă. Икĕ хутчен вăрçăра пулнă. Анчах халĕ, çĕршывшăн питех те хăрушă кунсем килсе тухнă вăхăтра, килте ларас-и? Çук епĕ ун пек çын мар. Манăн тăван çĕршыв хаклă. Эпĕ ăна вĕçĕмсĕр юрататăп, уншăн вăрçма граждан вăрçи вăхăтĕнче хамăн ирĕкĕмпе Хĕрлĕ Çар ретне тăтăм, тăшмана çĕмĕрме [illegible] çапăçрăм. 1914—1916-мĕш çулсенче нимĕçсемпе вăрçрăм. Суранлантăм. Халĕ ĕнтĕ эпĕ [illegible]. Тăшман пирĕн Совет çыннисене—старикесене, карчăксене, хĕрарăмсене, ача-пăчасене çакса, персе вĕлерет, вутта пăрахса çунтарать. Ĕçлеме юрăхлă çамрăксемпе хĕрарăмсене Германие чура тума хăваласа кайса, йывăр ĕç ĕçлеттерет. Вĕсене выçăллă-тутăллă усрать. Ĕçлеймен пулсан персе пăрахать. Çак мăшкăла илтсе курса тăрса, епле-ха эпĕ килте ларма пултарăп? Çук, эпĕ вăрçăра пулма тивĕçлĕ! Пĕр нимĕç фашистне персе пăрахсан та, Хĕрлĕ Çара усă туни пулĕ. Çук, ку сахал. Эпĕ вăйлă-ха. Пĕр фрица çеç мар, вуннăшне, çĕрĕшне те пĕтерме вăй çитĕ...

Эпĕ вăрах шухăшласа тăмарăм. Хĕрлĕ Çар ретне хам ирĕкпе каясси çинчен заявлени çырса военкомата васкаса утатăп. Малтанах мана Çара илесшĕн мар пулчĕç.

Çитĕ сана, эсĕ икĕ вăрçăра пулнă. Пирĕн çамрăксем те çителĕклех-ха. Килте пурăн, тесçĕ мана военкомат [illegible].

Эсир манăн çула ан пăхăр. Сывлăхăм пур. Нимĕç фашисчĕсене хирĕç çапăçма пултаратăп эпĕ,—тетĕп.

Военкомата ĕçлекенсем ман çине пăхаççĕ те [illegible].

Эсир ан кулăр. Эпĕ сирĕнпе кулăшла выляма килмен кунта. Вăрçă вăл кулăш мар,—тетĕп çиллене-нерех.

Кураççĕ: эпĕ вĕсемпе шӳт тумастăп. Хăйсен хушшинче хуллен пăшăл-пăшăл калаçаççĕ. Хуть те мĕнле вăрттăн калаçсан та, эпĕ пурне те витĕр илтетĕп. Манăн хăлхасем сивчĕ.

— Ну, юрĕ. Паянлăха киле кай. Тепĕр хут шухăшласа пăх. Ыран татăклăн пĕлтерĕпĕр, — тесе ăсатса ярасшăн мана.

—Мĕн шухăшламаллине эпĕ тахçанах шухăшланă. Эсир мана калеллĕ ан çӳретĕр. Эпĕ фронтра пулма тивĕçлĕ,—терĕм юлашкинчен татса.

Хам çирĕп тăман пулсан, эпĕ халĕ те фронтра пулас çукчĕ-и тен...

— Ну, юрĕ апла пулсан. Ыран кил,—терĕç юлашкинчен.

—Тавтапуç, ырă сăмахăршăн,—тесе тавтурăм та, пурне те алă тытса тухрăм.

Тепĕр кунне ирех военкомата çитрĕм. Вĕсем мана фронта ăсатмалли хутсене хатĕрлесе хунă.

—Ну, юлташ, ăнăçлă çул пултăр. Нимĕç захватчикĕсене лайăххăн çĕмĕрме ырлăх сунатпăр. Ырă-сывă çавăнса таврăнмалла пултăр,—тесе ăсатрĕç вĕсем.

Паян акă эпĕ фронтра [illegible] фашистсене хирĕç çапăçма пуçланăранпа 14 уйăх тултĕ. Çак вăхăтра 33 хут наступленине пултăм. [illegible] суранланмарăм, стройран тухман. Сурана туртса çыхнă та, малаллах кайнă. Мĕнле те пулин нимĕç салтакĕсене нумайрах пĕтерме тăрăшатăп. Хама вĕлересси çинчен шухăшлама та маннă. Маншăн пуринчен хаклии вăл—тăшман нумайрах пĕтесси тата ăна хамăн тăван çĕршывран хăваласа кăларасси.

Хăварах шутласа пăхăр ĕнтĕ: çав 33 наступленире эпĕ вăтамран икшер фрица çеç пĕтернĕ пулсан та—66 фриц «леш тĕнчере». Виçшер вĕлернĕ пулсан—99... Пĕр ӳстермесĕр калатăп: фронта килнĕренпе эпĕ 100 фрица вĕлернĕ-вĕлернех. Эпĕ вăл шута малашне татах ӳстерсе пыратăп.

Виçĕ хут вăрçăра пулса, виçĕ хут çĕнĕрен çуралса ӳсрĕм эпĕ. Фашистсем манăн пĕртен-пĕр юратнă ывăлăма вĕлерчĕç. Унăн вырăнне эпĕ вĕсене çĕр хут таварăп. Эпĕ ашшĕ. Манăн ватă алă чĕтресе тăмĕ.

Хисеплĕ редактор, çак сырăва «Чăваш Коммуни» хаçата пичетлеме ыйтатăп. Чăваш халăхĕ эпĕ мĕнле çапăçни çинчен пĕлтĕр.

Сырăва çĕрле, шăши куçĕ пек çутăра çыратăп. Эпир черетлĕ наступлени [illegible]. Тепĕр сехетрен атакăна каятăп. Ку манăн 34-мĕш атака пулать. [illegible]

М. Н. ДАНИЛОВ-ЧАЛДУН.
ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн—0—67, редакци секретарĕн—4—26, парти пурнăç пайĕн—3—99, ялхуçалăх пайĕн—5—31, издательство конторин—0—23.

НТ 343 Типография № 1, Управления полиграф промышленности при СНК ЧАССР Заказ № 2 Ф 6 53 12 п.